# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ   1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

71 (8935) № ✻ Шăматкун, 2021 ҫулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Суйлав

## Суйлав участокĕсем сасăлакансене кĕтеҫҫĕ

***Сентябрĕн 17 – 19-мĕшĕсенче Муркаш район территорийĕнче 46 суйлав участокĕ ĕҫлет***








Суйлавҫăсем РФ Патшалăх Думине тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашне депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн тата суйлава хутшăнакан партисемшĕн сасăлаҫҫĕ. Кунпа пĕрлех Мăн Сĕнтĕр, Катькас, Муркаш, Турай, Чуманкасси, Юнкă, Ярапайкасси, Ярославка ял тăрăхĕсен территорийĕсенче вырнаҫнă хăш-пĕр суйлав участокĕсенче депутатсен район Пухăвĕн депутатне тата депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен депутачĕсене суйлассипе хушма суйлав иртет.

1201-мĕш номерлĕ суйлав участокĕ район центрĕнчи «Сывлăх» спорт шкулĕн ҫуртĕнче вырнаҫнă. Суйлавҫăсем сасăлавăн пĕрремĕш кунĕнчех пысăк активлăх кăтартаҫҫĕ. Сасăлама пĕршерĕн-икшерĕн кăна мар, ҫемйисемпе килекенсем те пур.

Суйлав участокĕн председателĕ Тамара Мешкова каласа панă тăрăх, суйлав йĕркеллĕ иртет. Суйлавҫăсем активлăх кăтартаҫҫĕ. Пĕрремĕш кунах ирхи 10 сехет тĕлне суйлав участокне пырса 100 ҫын ытла кандидатсемшĕн хăйсен сассине пама ĕлкĕрнĕччĕ те ĕнтĕ.

Суйлава паянхи лару-тăрăва шута илсе, Роспотребнадзорăн чикĕлевĕсене тата санитари нормисене пăхăнса ирттереҫҫĕ. Сасăлава пыракансене пурне те маска, перчетке, ручка параҫҫĕ, алăсене дезинфекцилессине пăхса хунă. Сасăлав пӳлĕмĕнче видеокамерăсем вырнаҫтарнă.

Сасăлав виҫĕ куна пырать. Суйлав участокĕсем сентябрĕн 17, 18 тата 19-мĕшĕсенче ирхи 8 сехетрен тытăнса 20 сехетчен уҫă пулаҫҫĕ. Тĕрлĕ сăлтава пула суйлав участокне пырайманнисене килĕсене пырса сасăлаттарассине те пăхса хунă.

Сăн ӳкерчĕксенче: Муркашри «Сывлăх» спорт шкулĕн ҫуртĕнчи 1201-мĕш номерлĕ суйлав участокĕнче.

В. ШАПОШНИКОВ
сăн ӳкерчĕксем.

Раҫҫейре

## 2022 ҫулхи уяв кану кунĕсем

***РФ Правительстви 2022 ҫулхи уяв кану кунĕсене ҫирĕплетнĕ. Ҫапла вара Ҫĕнĕ ҫулхи кану кунĕсем 10 куна тăсăлаҫҫĕ, май уйăхĕнчи уяв кунĕсем вăхăтĕнче апрелĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса майăн 3-мĕшĕччен тата майăн 7-мĕшĕнчен тытăнса 10-мĕшĕччен канмалла пулать. Кун пирки РФ Министрсен Кабинечĕн официаллă Telegram-каналĕнче пĕлтернĕ.***

«Правительство Раҫҫей ҫыннисем 2022 ҫулта мĕнле канассине палăртнă», – тенĕ пĕлтернинче. Министрсен Кабинетĕнче палăртнă тăрăх, январĕн 1 тата 2-мĕшĕсем (шăматкунпа вырсарникун) уяв кунĕсене лекеҫҫĕ, ҫавăнпа та вĕсене майăн 3 тата 10-мĕшĕсене куҫарнă. Мартăн 5-мĕшĕнчи шăматкуншăн мартăн 7-мĕшĕнчи тунтикун канмалла пулать.

Ҫапла вара Ҫĕнĕ ҫул уявĕсем 2021 ҫулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчен тытăнса 2022 ҫулхи январĕн 9-мĕшĕччен тăсăлĕҫ. Май уйăхĕнчи пĕрремĕш уяв кунĕсенче 4 кун – апрелĕн 30-мĕшĕнчен тытăнса майăн 3-мĕшĕччен канмалла пулать. Май уйăхĕнчи иккĕмĕш уяв кунĕсенче те 4 кун – майăн 7 – 10-мĕшĕсенче канăпăр.

Февральте Раҫҫей ҫыннисем февралĕн 23-мĕшĕнче, мартра – мартăн 6 – 8-мĕшĕсенче канаҫҫĕ (мартăн 5-мĕшĕнчи шăматкуна мартăн 7-мĕшĕнчи тунтикуна куҫарнă). Виҫĕ кунлă кану кунĕсем ҫитес ҫул июнĕн 11 – 13-мĕшĕсенче тата ноябрĕн 4 – 6-мĕшĕсенче те пулаҫҫĕ.

Кăҫалхи декабрĕн 31-мĕшне кану кунĕ тесе 2021 ҫулхи кану кунĕ тĕлĕшпе тунă йышăнупах ҫирĕплетнĕ. РФ Ĕҫ тата социаллă хӳтлĕх министрĕ Антон Котяков унччен пĕлтернĕччĕ, декабрĕн 31-мĕшне яланхи кану кунĕ тăвасси пирки ыйтăва министерство пăхса тухма палăртать.

2022 ҫулхи декабрĕн 31-мĕшĕ кану кунĕ пулать, мĕншĕн тесен шăматкуна лекет.

ТАСС.

Ҫырăнтару – 2022

## Ҫитес ҫул илсе тăма малалла ҫырăнтараҫҫĕ

**«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2022 ҫулхи январьтен илсе тăма почта уйрăмĕсенче ҫырăнтараҫҫĕ. Хаҫата ултă уйăха ҫырăнмалли хак – 606 тенкĕ те 66 пус.**

Редакци.

**28 СЕНТЯБРЯ – ПРИЕМ ДЕТСКОГО ВРАЧА-ОФТАЛЬМОЛОГА**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 15**
**Запись по тел. 8-967-475-87-57.**
Имеются противопоказания. Проконсультируйтесь со специалистом. 2-10.

**Саламлатпăр**

Ырă кăмăллă аттене, маçака – Тури Панкли ялĕнче пурăнакан **Иван Иванович ПЕТРОВА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Сывăх çынсемпе пĕрле савăнса пурăнма, килекен кашни куна хаваспа кĕтсе илме çирĕп сывлăх, иксĕлми вăйхал, вăрăм кун-çул, тулли телей сунатпăр. Саншăн çутаттăр илемлĕ çут çăлтăр, саншăн çĕклентĕр ăшпиллĕ хĕвел, савăк сар кайăк çĕн юрă çураттăр, ырлăх, телей кўтĕр çак юбилей. Эпир сана, тăван кил ăшшине упракана, хисеплетпĕр, юрататпăр. Эс пуррипе кун-çул хаваслă та телейлĕ.

**Пур кăмăлтан ырă сунса: кĕçĕн ывăлĕ Илья хăйĕн çемйипе.**

**Пенсисем**

## «Ял хушма тўлевĕ» пиркиех

2022 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ялта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă пенсионерсене паракан хушма тўлеве пенсие тухнă хыççăн хулана пурăнма куçса кайнисем те илме пуçлаççĕ. Кун пирки Елена Бибикова сенатор каласа панă.

Парламентари çавна аса илтернĕ. Хальхи вăхăтра кун пек хушма тўлеве 30 çултан кая мар ял хуçалăх производствинче вăй хунисем ялтах пурăнаççĕ пулсан илме пултараççĕ. Хушма тўлев фиксированнăй тўлевĕн 25 процентĕпе танлашать.

«Анчах та 2022 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса асăннă тўлеве хулана пурăнма кайнă çынна та тўлеме тытăнĕç. Енчен те кама та пулин хулана пурăнма кайнă пирки хушма тўлеве пама пăрахнă пулсан, ăна тавăрса парĕç», – ăнлантарса панă Е. Бибикова.

**«Парламентская газета».**

**Республикăра**

## АПК субъекчĕсене çĕнĕрен шута илĕç

Чăваш Ен Пуçлăхĕ агропромышленноç комплексĕн мĕнпур субъекчĕсен инвентаризацине ирттерме хушнă. Çакăн пек задачăна Олег Николаев ял хуçалăх сферинчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен представителĕсемпе тĕл пулнă чухне лартнă.

«Чăваш Енре декабрĕн 1-мĕшĕчен АПК сферинчи пур субъекта та инвентаризацилеме тивĕç. Çавăн пекех производство ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăнман хресчен (фермер) хуçалăхĕсем пирки те информаци пĕтĕмлетмелле», – çакă вăл республика Пуçлăхĕ районсемпе хуласен администрацийĕсен ертўçисене панă хушуран.

Республика Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, инвентаризаци ирттерни ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсемпе тĕллевлĕ тата тухăçлă усă курнине палăртма, инвесторсемпе арендаторсем валли площадкăсем хатĕрлеме май парĕ. Вĕсем вара ку çĕрсене эффективлă аталантарма пултарĕç. Çакă вăл предприятисенче вăй хуракансене социаллă хўтлĕх мелĕсемпе тивĕçтерессипе те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Ĕç укçине официаллă мар майпа тўлени, тупăшсене налук хурассинчен пытарасси пулмалла мар.

Çавăн пекех Олег Николаев ял хуçалăх предприятийĕсем кооперативсене пĕрлешни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. «Пĕрле çыхăнса ĕçлессин çакăн пек формăсемпе усă курни çĕнĕ продукцисем туса кăларассипе тата конкурентлăрах пулса тăрассипе çыхăннă. Çакă малалла тăнăçрах аталанма, ура çинче çирĕп тăма май парĕ. Ĕçе çакăн пек йĕркелекенсене патшалăх федераци шайĕнчен ытларах та ытларах пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерет. Эпир те регион шайĕнче çапла майпа аталанма тăрăшатпăр», – палăртнă вăл.

**ЧĂВАШИНФОРМ ИА.**

**Районта**

# Муркаш районĕн – хăйĕн гербĕ, ялавĕ тата гимнĕ

***Иртнĕ ытларикун, сентябрĕн 14-мĕшĕнче, депутатсен район Пухăвĕн черетсĕр 12-мĕш ларăвĕнче Муркаш районĕн официаллă символĕсемпе – ялавĕпе, гербĕпе тата гимнĕпе паллаштарчĕç.***

***Район гербĕпе ялавне депутатсен Муркаш район Пухăвĕн 2020 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнчи С-4/9 номерлĕ йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ, хыççăн вĕсем патшалăх геральдика экспертизи тухнă. Çапла вара район ялавне тата гербне Раççей Федерацийĕн патшалăх геральдика регистрĕнче 13502-мĕш тата 13503-мĕш номерсемпе регистрациленĕ.***

***Проекта туса хатĕрлессипе автор ушкăнĕ – Юрий Росич (Мускав) тата Муркаш район администрацийĕ ĕçленĕ.***

***Муркаш районĕн гимне 2002 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче депутатсен Муркаш район Пухăвĕн йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ.***

## *Муркаш районĕн гербĕ*

Герб пирки геральдика ăнлантарăвĕнче çапла çырса хунă: «Йĕпкĕн хĕрлĕ хирте юпа пек хунă ылтăн юман туратти (çулçăсемпе тата йĕкелсемпе), унăн аври çине пилĕклесе кĕмĕл алшăлли хунă, ăна темиçе çĕрте хутлатнă, хĕрлĕ тĕслĕ чăваш тĕррисемпе илемлетнĕ. Юман тураттин икĕ енĕпе алшăлли айĕнчен çўлелле виçшер ылтăн пучах тухса тăраççĕ. Гербăн çўлти ылтăн тĕслĕ хумлă пайĕнче пĕр ретре йĕпкĕн хĕрлĕ тĕслĕ чалăш виçĕ хĕрес касса лартнă».

Муркаш районĕн гербĕн символикине ăнлантарнинчен çакна палăртмалла. Муркаш районĕ Чăваш Енĕн çурçĕр пайĕнче çĕр пин юрă, çĕр пин тĕрĕ тата çĕр пин сăмах тăрăхĕнче, тĕреклĕ юман вăрманĕсемпе симĕс улăхсем, çутă юхан шывсемпе кўлĕсем хушшинче вырнаçнă. Герб ытарлăх чĕлхипе Муркаш районĕн истори, сут çанталăк тата ытти хăйне евĕрлĕхĕсене сăнлать.

Щит варринчи çулçăсемлĕ тата йĕкелсемлĕ юман тураттти – хăватлăх, вăрăм ĕмĕр тата çирĕплĕх палли; кунпа пĕрлех писсе çитнĕ йĕкелсем сывă ăрăва сăнлаççĕ. Туратăн икĕ хĕрринчи ылтăн тулă пучахĕсем – пуянлăх сăнлавĕ, ĕçченлĕхе тата пысăк тухăçа, район аграри енĕпе специализациленнине пĕлтереççĕ.

Чăваш наци тĕррисемпе тĕрлесе илемлетнĕ алшăлли муркашсем чăваш халăхĕн йăли-йĕркине типтерлĕн упраса пурăннине пĕлтерет. Гербăн çўлти хумлă пайĕ Муркаш районĕн çурçĕр чиккипе Атăл юхан шывĕ юхса выртнине сăнлать.

Çўлтех сакăр вĕçлĕ çăлтăр йышши виçĕ паллă ăнăçу кўрекен хĕвел çутине пĕлтерет. Вĕсем виççĕ пулни халăхри: «Пулнă, Пур, Пулатпăр» ăнлава çыхăннă.

Тĕссем пирки калас пулсан, ылтăн (сарă тĕс) – тухăça, пуянлăха, тăнăçлăха, хисеп тунине тата интеллекта пĕлтерет. Ĕçченлĕхе палăртать.

Йĕпкĕн хĕрлĕ (пурпур) тĕс – чыс, тивĕç, тўрĕ кăмăл тата чи



аслă влаç палли.

Кĕмĕл (шурă тĕс) – аталану шайĕн, тасалăхăн, пархатарлăхăн тата ĕненў палли.

## *Муркаш районĕн ялавĕ*



Ку вăл тăваткал ан пулса тăрать, унăн сарлакăшĕ тăршшĕн 2/3 пайĕ чухлĕ. Унăн пĕтĕм анлăшĕпе Муркаш район гербне вырнаçтарнă. Геральдика ылтăн, кĕмĕл тата йĕпкĕн хĕрлĕ тĕссене сарă, шурă тата тĕксĕм хĕрлĕ тĕссемпе ылмаштарнă.

Ялавăн тўнтер енĕ пиччен ен тĕкĕр çинче сăнланни пулса тăрать. Ялава район гербне тĕпе хурса туса хатĕрленĕ.

Муниципалитет йĕркеленĕвĕн ялавне вырăнти хăй тытăмлăх органĕн çурчĕсем çинче яланах çĕклеççĕ.

Çавăн пекех ăна вырăнти хăй тытăмлăх органĕн залĕсенче, Муркаш районĕн пуçлăхĕн – депутатсен район Пухăвĕн председателĕн, район администрацийĕн пуçлăхĕн ĕç кабинечĕсенче вырнаçтараççĕ.

Район ялавне вырăнти хăй тытăмлăх органĕ ирттерекен официаллă церемонисем тата ытти савăнăçлă мероприяти вăхăтĕнче çĕклеççĕ. Çавăн пекех ăна обществăлла пĕрлешўсем, предприятисем, учрежденисем тата организацисем савăнăçлă мероприятисем ирттернĕ чухне çĕклеме пултараççĕ.

Муркаш районĕн гербĕ тата ялавĕ пирки калакан положение депутатсен район Пухăвĕн йышăнăвĕпе 2020 çулта çирĕплетнĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## *Муркаш районĕн гимнĕ*

Кĕвви Ф. Лукинăн
Сăвви А. Лукинăн

Таврара Муркашăн
Ячĕ хисепре.
Юрăра мухтасшăн
Халь эпир тепре.

**Хушса юрламалли:**
Ўс, çĕклен, Муркашăмăр,
Пуянлан, вăйлан,
Ĕçĕмĕрпе юррăмăр
Сан валли ялан!

Сĕчĕ-çăвĕ тулăх,
Тырăран пуян.
Кĕрешме хăюлăх
Хушăнать ялан.

Савăк çепĕç юрă
Янăра, кĕрле.
Утăпăр маттуррăн
Халăхпа пĕрле.

**Ял тăрăхĕсенче**

# Халĕ çурт умĕнче хăтлă

Москакассинче уйрăм пўртсем кăна мар, нумай хваттерлĕ çуртсем те пулнăран, кунти хăтлăх ĕçĕсем те тĕрлĕ енлĕ. Юлашки çулсенче ял тăрăхĕнче тирпей-илем ĕçĕсене чылай пурнăçласа пыраççĕ. Çакна курса тăнăран ĕнтĕ нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем те çурт таврашĕсене хăт кĕртмелли майсемпе интересленнĕ. Çапла Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕ çак ĕçе пурнăçламалли майсем шырама тытăннă. Шыракан тупать, теççĕ: кăçал ку ĕçе пурнăçлама май паракан программа пуррипе усă курнă та Москакассинче.

Зеленая урамри нумай хваттерлĕ 8-мĕш çурт таврашĕнче халĕ хăтлă та тирпейлĕ. Çурт территорине Чăваш Республикин «Капитальный ремонт дворовых территорий многоквартирных домов, подъездов к дворовым территориям многоквартирных домов населенных пунктов» программăна кĕнипе пурнăçлама пултарнă.

Москакасси ял тăрăхĕн администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, ĕçе пурнăçлама укçа-тенке Чăваш Республикин тата Москакасси ял тăрăхĕн бюджечĕсенчен уйăрнă.

Çулла çанталăк лайăх тăнипе усă курса подрядчик, Иван Шишкин уйрăм предприниматель, ĕçсене контрактпа палăртнă срокрах вĕçленĕ. Ĕçе вырăнти администраци августра йышăннă.

Çак нумай хваттерлĕ çурт умĕнчи çула çĕнĕрен асфальт сарса тухнă, кунсăр пуçне машинăсем валли ятарлă вырăн йĕркелесе хăварнă. Малтанхипе танлаштарсан, халĕ тарнспорта ирĕклĕрех, çапах та, паллах, йĕркене пăхăнса, лартса хăварма май пур.

Асфальтăн малтанхи сийĕн ванчăкĕсемпе усă курса вара ку çуртра пурăнакан Лев Гаврилов,



Юрий Столяров, Евгений Бобыкин тротуар та туса хăварнă. Ачасене шкула çўреме меллĕ те тирпейлĕ пултăр тесе тăрăшнă.

Москакассинче нумай хваттерлĕ çуртсем татах пур. Малаллахи çулсенче ытти çурт территорине те çĕнетсе пыма тĕллев лартнă ял тăрăхĕн администрацийĕ. Ялта пурăнакансемпе администраци хушшинче килĕшўпе ăнлану пуррине калать ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Денис Кириллов. Апла пулсан вырăнти хăтлăх ĕçĕсем малашне те калкал пырасси иккĕлентермест.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Социаллă ыйту**

# Ял малашлăхĕ те, ачасен вĕренĕвĕ те – пĕтĕмпех кăсăклантарать

**Хĕрарăмсен районти канашĕн ларăвĕсемпе канашлăвĕсенче яланах çивĕч ыйтусем çĕклеççĕ. Çак эрнери черетлĕ канашлу та ĕçлĕ лару-тăрура иртрĕ. Муркаш районĕнчи пуçаруллă та пултаруллă хĕрарăмсем патне республикăн хĕрарăмсен канашĕн ертÿçи Наталья Николаева килсе çитрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, «Сеспель» предприятин генеральнăй директорĕ Владимир Бакшаев та хĕрарăмсен канашлăвне хутшăнчĕç.**

Ахальтен мар. Муркаш хĕрарăмĕсем çак ертÿçĕсемпе пĕрле пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем сÿтсе яврĕç: ачасен профиль вĕренĕвĕн, вĕренÿ тапхăрĕнче кашни ачана уйрăммăн аталанса пыма пулăшассин ыйтăвне хускатрĕç. Çамрăк специалистсене ялти сиплев тата вĕренÿ учрежденийĕсене ĕçлеме килме хавхалантарасси пирки те тĕплĕ калаçрĕç. Патшалăх пĕрлехи экзаменĕсене лайăх тытакансем Чăваш Енри аслă шкулсене мар, пысăк хуласенчи аслă шкулсене суйласа илнин тенденцийĕ пурри те хĕрарăмсем хушшинче калаçу çуратрĕ – пултаруллă ачасем аяккалла каяççĕ.

Наталья Николаева çак ыйтусене татса парас тĕллевпе республика шайĕнче ку таранччен мĕн пурнăçланипе тата мĕн тума палăртнипе паллаштарчĕ пулсан, Ростислав Тимофеев районта шкулсемпе ача сачĕсене çĕнетес, вĕсене çĕнĕ оборудованипе тивĕçтерес ĕçе хăватлăн тытăннине, çакă пĕтĕмпех ачасен аталанăвĕ çине ыră витĕм кÿмеллине палăртрĕ.

Владимир Бакшаев вара шăпах профиль вĕренĕвĕ пысăк пĕлтерĕшли çинче чарăнса тăчĕ, мĕншĕн тесен «Сеспель» предприяти те рабочи специальноçĕсене алла илнĕ çамрăк специалистсене кĕтет. Кашни специалистăн ĕçне уйрăммăн хаклас тĕллевпе нумаях пулмасть предприятире ĕç укçи тÿлемелли йĕркене улăштарни çинчен те пĕлтерчĕ вăл. «Çапла иртнĕ уйăхшăн сварщиксене, сăмахран, 80 – 100 пин тенкĕ тÿлерĕмĕр», – терĕ предприяти ертÿçи. Ĕçе вырнаçакан çамрăксенчен çирĕп те туслă коллектив йĕркелесшĕннине палăртрĕ. Кунта вара пысăк тупăш илме майсем пур: Раççейри специализациленĕ транспортăн 30 процентне «Сеспель» туса кăларать.

Хĕрарăмсен районти канашĕн ертÿçи Лилия Тарасова хальхи вăхăтра пирĕн республикăра пултаруллă ачасене аталанма пулăшнине, йывăрлăха лекнĕ ачасене çăмăллăхсемпе тивĕçтернине пысăка хурса хакларĕ.



Муркаш районĕнче те вĕренÿре лайăх ĕлкĕрсе пыракан, обществăлла ĕçе активлă хутшăнакан ачасен çулсеренех район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине тивĕçме май пуррине палăртрĕ.

Канашлăва вĕçленĕ май, хĕрарăмсем вырăнти вĕренÿ тата культура учрежденийĕсенче кăна мар, ашшĕ-амăшĕн те ачисене тăван çĕре юратма, ăна хаклама пĕчĕкренех вĕрентсе пымаллине палăртрĕç. Çакă та вĕренсе тухнă çамрăк специалистсене укçа хавхалантарăвĕпе пĕрлех тăван çĕре таврăнса ĕçлеме хистекен самантсенчен пĕри пулмаллине палăртрĕç вĕсем. Выпускниксем республикăри аслă шкулсене суйласа илессин никĕсĕнче те, унти паха пĕлÿпе пĕрлех, тăван çĕре юратни те пулмаллине каларĕç.

Канашлу савăнăçлă самантпа вĕçленчĕ – хĕрарăмсен пуçарăвĕсене пурнăçа кĕртсе пырассине пысăк тÿпе хывнăшăн хĕрарăмсен районти канашĕн хăш-пĕр хастарĕсем Наталья Николаева аллинчен Тав çырăвĕ илме тивĕçрĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Ыран – Вăрманçă кунĕ**

# Яваплăха кашнин туймалла

***Тăван ен илемĕ пирки сăмах хускатсан куç умне чи малтанах ял çывăхĕнчи вăрман тухать. Вăрман – çут çанталăкăн таса сывлăш бассейнĕ. Пĕр гектар çинчи вăрман çулталăкра 50 – 70 тонна сывлăша фильтрласа тасатать. Çапла вара вăл çын пурнăçĕ çине мĕнле витĕм кÿни пирки калама сăмах та çитмест. Вăрман илемĕпе пуянлăхĕ çынсенче ыră кăмăллăха аталантарать, вĕсен çĕршыв умĕнчи юратăвне вăйлатать, ывăннине иртterет.***

***Çитес вырсарникун вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Вăрман вăл халăх пуянлăхĕ пулнăран уяв умĕн эпир хамăр тĕпеле Ильинка лесничествин лесничине В. ВАСИЛЬЕВА чĕнтĕмĕр. Хамăр калаçура вăрмана пăхса тăрассипе, унăн пурнăçĕпе кăсăклантăмăр.***

**– Владислав Витальевич, вăрман – пирĕн планета ÿпки. Çакна шута илсе ăна лартса ÿстересси тата сыхласси çине çĕршыв шайĕнче пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Çак тĕллевпе ятарлă саккунсем вăйра тăраççĕ. Пирĕн район территорийĕнче те вăрман сахал мар. Мĕнле лаптăк йышăнать-ха вăл?**

– Калаçăва чĕннĕшĕн тавах. Хамăр таврари çут çанталăка хисеплессине, унăн илемĕшĕн тăрăшассине пĕрлехи ĕç тенине никам та хирĕçлемест. Апла пулин те вăл нумай чухне сăмах çинче кăна юлать. Çакă паянхи вăрмансене çитсен те куç умне туллин тухать. Унти нумай ÿкерчĕк чуна ыраттарать. Апла пулсан та вăрман тирпейлĕхĕ вăрманçă ĕçленипе çеç туллин пурнăçланайманнине те ăнланмалла. Çакна кашни çын çителĕклĕ ăнлансан çеç вăрманти тирпейлĕх пирĕн пурнăç илемĕ пулса тăрĕ. Ун чухне унта уçăлса çÿреме те, хĕрÿ ĕç хыççăн канăва тухма та меллĕ пулĕ.

***ЧР Çут çанталăк министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Енĕн 632,3 пин гектарне вăрман йышăнать. Ку вăл – пĕтĕм территорин 3-мĕш пайĕ. Ильинка лесничестви паян 10316 гектар çинчи хутăш вăрмансене пĕрлештерсе тăрать.***

Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсен професси уявĕ умĕн эпĕ, май килнипе усă курса, хамăр хуçалăхра ĕçленĕ ветерансене, ăна аталантарма пулăшнисене тата халĕ те çак ĕçрен айккинче тăманнисене, паян пирĕн тытăмра ĕçлекенсемпе вĕсен çемье членĕсене, вăрман аталанăвне пысăк тÿпе хывакан шкул ачисене вăрманçăн çывхаракан кунĕпе саламлатăп, телей те ăнăçу сунатăп. Эсир пĕрре кÿлĕннĕ ĕçрен малашне те пăрăнмасса шанса тăратăп. Сирĕн тăрăшулăхăр районта пурăнакансене вăрманпа туслă çыхăну тытма пулăшнине уйрăммăн палăртатăп. Йывăç лартма юратакансем йышлă пулнипе вăрман лаптăкĕ те Муркаш тăрăхĕнче пĕчĕк мар.

**– Вăрман лаптăкĕ пысăк пулни лайăх-ха. Анчах ăна пăхса тăрасси маншăн пĕртте çăмăл пек туйăнмасть. Кунта эсир мĕнле ĕçлесе пыратăр? Вунă пин ытла гектар йышăнакан вăрманта пур ĕçе те вăхăтра пурнăçлама ĕлкĕретĕр-и?**

– Хамăр районти вăрман лаптăкне республикăннипе танлаштарнинчен пирĕн ĕç калăпăшĕ те куç умне туллин тухать, умри тĕллевсем те лайăх палăраççĕ. Кунта кăштах истори страницисене уçса пăхар-ха. Ильинка вăрман хуçалăхне Раççей Федерацийĕн вăрман хуçалăх агентствин 2009 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнчи приказĕпе Ильинка тата Малиновка лесничествисене пĕрлештерсе туса хунă. Ун хыççăнхи вăхăтра вăрман хуçалăхĕнче çĕнĕлĕхсем сахал мар пулчĕç. Паян пирĕн тытăмра вăрмана сыхлакан, хÿтĕлекен тата пăхса тăракан орган пур, уйрăммăн производство участокĕ ĕçлет. Производство участокне çамрăк вăрманçă А. Михайлов ертсе пырать.

Эпир республикăри Сăнавлă вăрман хуçалăх тытăмне кĕретпĕр. Пирĕн таврара ытларах çулçăллă вăрман ÿсет. Район вăрман лартассипе, тăван ене юратассипе ыттисенчен тăрăшуллăрах ĕçлени паллă. Çакна ăнланни пире татах та пуçаруллăрах пулма хистет. Çапла вара ял çыннисемпе пĕрле пулса юлашки çулсенче вуншар гектар çинче йывăçсем лартрăмăр, вăрмансене тасатса çамрăк йывăççене вăйлăрах ÿсме май туса патăмăр. Лесничествăра ятарлă машинăпа пушар хуралне йĕркелени хамăр вăрмансенчи хăрушсăрлăха та тивĕçлĕ шайра тытса пыма пулăшнине палăртса хăварас килет.

**– Пĕр çын сурни типсе пырать, çĕр çын сурать – кÿлĕ пулать. Çакă вăрман хуçалăхĕшĕн те ют мар, мĕншĕн тесен вăрман пурнăçĕ пĕр çын ĕçленипе йĕркеленмест. Уяв умĕн историе пăхса тата ĕççене пĕтĕмлетсе ыră сăмах каламаллисем те пур пулĕ.**

– Пур ĕçри пекех, вăрман хуçалăхĕнче те хастар ĕçпе ыră ята тивĕçнисем, хăйсем хыççăн тарăн йĕр хăварнисем сахал мар. Вĕсене эпир кашнине ятран астăватпăр, мĕншĕн тесен пĕрле пулсан тата пĕр-пĕрин ĕçне хаклама пĕлсен çеç эпир вăйлă. Хамăр енри кашни вăрманçă тăван тавралăх пуянлăхĕшĕн, ăна илем кĕртессишĕн ĕçлени – паян йăлтах куç умĕнче. Вăхăтра хамăр тăрăхра юманлăхсем лартса чĕртессипе тата вĕсене сыхлассипе ырми-канми тăрăшнă А. Селюшкин, В. Анисов, Н. Пантелеймонов, И. Игнатьев, С. Николаев, Г. Флегонтов, А. Касьянов вăрманçăсем таврари ялсенче тата район пурнăçĕнче ыră ят хăварчĕç. Вăрман хуçалăхĕнче тĕрлĕ ĕçре вăй хунă В. Голубев, В. Колбасов, М. Моисеев, Л. Николаев, П. Андреев, В. Таймаскин, Н. Щербаков, Г. Мастеров, В. Николаевпа Б. Хрусталев хăйсен тăрăшулăхĕпе вăрман хуçалăхĕн чысĕ пулса тăчĕç.

**– Умра йывăç лартмалли черетлĕ тапхăр пулнине шута илсе хаçат вулакансене мĕн каланă пулăттăр?**

– Йывăç лартмалли кĕрхи тапхăр çитрĕ. Çак ĕçе юратакансем çырма-çатрана, çĕр ишĕлекен вырăнсене йывăççем ытлă-çитлĕ лартасса шанатăп. Районта пурăнакан ытти çын та унта активлă хутшăнасса кĕтетĕп – тăван ен илемĕ хамăр алăра.

Çÿлерех каланине шута хурса вăрмана канма тухакансем те хăйсем хыççăн кану вырăнĕсене тирпейлесе хăварасса, хыççăн çав вырăна канма пыракан тепĕр ушкăнăн пит хĕретмелле пулмасса та манăн шанас килет.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Раççейре**

# Спорт налук вычетне илме

Михаил Мишустин премьер-министр спорт налук вычетне илмелли услугăсен перечене çирĕплетнĕ. Перечене физкультура тата сывлăха çирĕплетмелли услугăсене, физкультура мероприятийĕсене хутшăнма май паракан услугăсене, тренировка планĕсене тата физкультура занятийĕсен программисене туса хатĕрлессине кĕртнĕ.

Çĕнĕ йышши налук вычетне президент хушнипе ĕçе кĕртнĕ. Ăна 2022 çулти расхутсене çирĕплетсе панипе илме пулĕ. Спорт налук вычетне çулталăкра физкультурăпа спорт валли тăкакланă суммăран шутласа параççĕ, анчах шута илекен чи пысăк сумма 120 пин тенкĕрен иртмĕ. Çапла вара çак налук вычечĕн чи пысăк сумми 15 пин те 600 тенкĕпе танлашĕ.

Вычет илессинче çын хăш организаци услугисемпе усă курни те пĕлтерĕшлĕ. Организацисен ятарлă перечĕнĕ пур. Кунпа пĕрлех вĕсен хăш-пĕр требованине те тивĕçтермелле: физкультурăпа спорт çав организацин тĕп ĕçĕ-хĕлĕ пулмалла, штатри сотрудниксен профиль пĕлĕвĕ е профессин вăтам пĕлĕвĕнчен пĕчĕк мар шайра илнĕ пĕлÿ пулмалла, организацин таварпа тата услугăпа тивĕçтерекен тÿрĕ кăмăллă мар поставщиксен списокĕнче пулмалла мар.

**«Российская газета».**

**Республикăра**

# Культура аталанăвĕ валли

Культура учрежденийĕсене аталантарма Чăваш Ен хушма 63 млн тенкĕ илĕ. Кун пирки республика пуçлăхĕ пĕлтернĕ.

«Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Федераци Пухăвне тухнă Çырура каланине пурнăçлама РФ Правительствин резерв фондĕнчен регионсене субсидипе тивĕçтереççĕ. Çав субсидие çĕнĕ йышши библиотекăсем тума, кĕнеке фончĕсене пуянлатма, ача-пăча театрĕсен пурлăхпа техника базине çирĕплетме параççĕ. Чăваш Ен хушма 63 млн тенке майлă илĕ», – пĕлтернĕ Олег Николаев.

Çак суммăн пысăк пайне, 40 млн тенке майлă, республикăра модельлĕ библиотекăсем тума уйăрĕç. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ çамрăксен театрĕн тата Чăваш патшалăх пукане театрĕн пултарулăх ĕç-хĕлне аталантарма тата вĕсене техника тĕлĕшĕнчен тивĕçтерме 16,3 млн тенке яхăн уйăрасси паллă. Çак театрсем кăçал çĕнĕ постановкăсем валли хушма оборудовани туянĕç.

Кунсăр пуçне республикăри библиотекăсем çĕнĕ художество литературине тата ача-пăча кĕнекисене туянма федераци бюджетĕнчен 6,5 млн тенкĕ ытла илĕç.

Светлана Каликова культура министрĕ палăртнă тăрăх, 2021 çулта библиотекăсен кĕнеке фончĕсене комплектлама республика бюджетĕнчен уйăрнă 13,8 млн тенкĕпе пĕрле пурĕ 20,3 млн тенкĕ тăкаклĕç. Кун пекки унччен пулман.

«Чăваш чĕлхине упрасси, вĕренесси тата аталантарасси» регион программине пурнăçа кĕртсе пыма кăçал республика бюджетĕнче чăваш чĕлхипе çырнă кĕнекесем туянма тĕллевлĕ укçа-тенкĕ пăхса хунă – 3,5 млн тенкĕ.

**ЧĂВАШИНФОРМ ИА.**

«Халăх пуçарулăхĕ»

# Шомик урамĕ тирпейленчĕ

Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕнче пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Ен ялĕсене тĕрлĕ программа шайĕнче 4,9 миллиард тенкĕлĕх аталантарĕç, çĕнетĕç. Ку укçа-тенкĕ социаллă, инженери, транспорт инфраструктурине çĕнетме каять. Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе ĕçлессипе кăçал 700 миллион ытла тенкĕ уйăрĕç.

Катькас ял тăрăхĕнче кăçал вырăнти активистсем тăрăшнипе, администраци йĕркеленипе, республика шайĕнчен пулăшнипе пуçарулăх мелĕпе виçĕ проект вăя кĕртрĕç.

***– Вырăнти çынсем пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе тăрăшни хамăр тăрăхри хăтлăх кĕртес ĕçе хăвăртлатнине ăнланаççĕ. Çапла майпа вырăнти çынсемпе пĕрле эпир пысăках мар ĕç сахал мар тума пултаратпăр, çакăнта республика тӳпене кĕни те питĕ лайăх. Çынсен кăмăлĕпе ăнланулăхĕ пулсан ку енĕпе эпир малашне те тăрăшăпăр, – терĕ Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Лебедев.***

Виçĕ проектран пĕри Шомик ялĕнчи Ториково урамĕнчи 68-мĕш çуртран тытăнса 55А çурт таранчченхи çула юсасси пулчĕ. Ку тĕлĕшпе муниципалитет килĕшĕвне апрелĕн 20-мĕшĕнче «Карьер Регион» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа çырнă, ĕç пурнăçлама килĕшессине Василий Васейкин алă пусса çирĕплетнĕ.

Контракт хакĕ 1 миллион та 55 пин те 600 тенкĕпе танлашнă. Ĕçе пурнăçлама республика бюджетĕнчен 633 пин те 360 тенкĕ уйăрнă. Ял тăрăхĕ 316 пин те 680 тенкĕ куçарнă. Вырăнти çынсем 105 пин те 560 тенкĕ укçа хывнă.

«Карьер Регион» чикĕллĕ яваплăхлă общество çӳлерех асăннă çула туса пĕтерессине ытлах вăраха яман, июль пуçламăшĕнче вĕçлемелле пулнă пулсан, тепĕр уйăхран çынсем юсанă çулпа усă курма пултарнă. Çынсем çак ĕçе пĕрлехи тăрăшулăхпа тума пултарнăшăн кăмăллă, малашне йĕпе-сапара та кунта иртсе çӳреме меллĕ пулĕ.



Халĕ Ториково урамĕнче çакăн пек такăр çул тăсалса выртать.

# Спорт валли тата выляма



Выляма тухнă хĕр ача тус-тантăшĕсене кĕтет.

**Шомик ялĕнчи Пошкар урамĕнче спорт тата вăйă площадки вырнаçтарса лартма Катькас ял тăрăхĕн администрацийĕ «Завод игрового спортивного оборудования» хупă акционерлă обществăпа (ROMANO бренд) майăн 20-мĕшĕнче тӳрĕ килĕшӳ тунă.**

**Документ тăрăх ĕç хакĕ пĕтĕмпе 300 пин тенкĕпе танлашнă.**

**Пĕрлехи ĕç валли республика бюджетĕнчен 180 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Ял тăрăхĕн бюджетĕнчен 90 пин тенкĕ куçарнă. Вырăнти тӳпе 30 пин тенкĕпе танлашнă.**

**«Завод игрового спортивного оборудования» хупă акционерлă общество ял çыннисен шанăçне тӳрре кăларнă, объекта палăртнă вăхăтра туса пĕтернĕ.**

**Килĕшӳ тăрăх июль пуçламăшĕ тĕлне вĕçлемелле пулнă пулсан, объекта унчченхи уйăхра вĕçне çитернĕ.**

**Халĕ вăл – ял ачисен юратнă вырăнĕ, вĕсем кунта хаваспах пухăнаççĕ, выляççĕ, сывлăха çирĕплетеççĕ. Çавăн пекех ку лаптăк ял сăн-сăпатне те илемлетет, хăтлăх кӳрет.**

**– Кунта выляма питĕ лайăх, – теççĕ умлăн-хыçлăн чупакан ачасем пĕр-пĕрин çине савăнăçлăн пăхса.**

# Ял çыннисен сĕнĕвне шута илсе тунă

Шатракассисем кăçал çава территорийĕнче пӳрт лартма шухăшланă пулнă. Ку пӳрт юлашки çула ăсатма пыракан çынсене питех те кирлĕ, уйрăмах хĕллехи сивĕ çанталăкра, йĕпе-сапара. Ĕç-пуçа епле йĕркелессине калаçса татăлнă хыççăн Шатракасси çăви çине пĕчĕк пӳрт вырнаçтарнă. Ăна валли «Город СК» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа килĕшӳ тунă. Вероника Куприянова генеральнăй директор шатракассисен ыйтăвне татса пама килĕшнĕ.

Ĕç хакĕ 350 пин те 289 тенкĕпе танлашнă. Тĕп пайне – 210 пин те 173 тенкине – республика бюджетĕнчен уйăрнă. Катькас ял тăрăхĕн бюджетĕнчен 105 пин те 87 тенкĕ куçарнă. Вырăнти тӳпе 35 пин те 29 тенкĕпе танлашнă. Объекта вăхăтра туса пĕтернĕ.



Экспертсем сĕнеççĕ

# Мĕн тума юрамасть 60 çул тултарнă хыççăн?

***Сывă мар йăла-йĕрке патне таврăнма йывăр мар. Вĕсем вара сирĕн пурнăçăн ылтăн çулĕсене хура сăрăпа сăрлама пултараççĕ. Eatthis портал экспертсен шухăшĕпе çыннăн 60 çул тултарнă хыççăн нихăçан та тума юраман пилĕк япалан спискине хатĕрленĕ.***

**1. Ытлашши пĕччен пулмалла мар**

Пĕчченлĕх вăл япăх кăна мар – вăл çыннăн ӳт-пĕвĕн чи пĕлтерĕшллĕ системине аркатать. Тĕпчевсем çавна кăтартса параççĕ: пĕччენлĕх ватă çынсен ăссăрлăхне 50 процент таран ӳстерме пултарать. Çитменнине пуç мимин сывлăхĕн хăрушлăхĕ çеç те мар. Нумаях пулмасть фин ученăйĕсем тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, икĕ теçетке çула яхăн хăйсене пĕчченлĕхре туйса пурăннă арçынсем хушшинче рак диагнозне лартнисем тата çак чире пула вилнисем самай ытларах. Пĕчченлĕх организмра стресс реакцине аталантарать, вăл вара шыçă чирĕ тата иммун системи вăйсăрланасси патне илсе пыма пултарать. Юлташсемпе тата сывăх çынсемпе хутшăнма тăрăшăр, интересселе кура ушкăнсене пĕрлешĕр, волонтер ĕçне кӳлĕнĕр.

**2. Вакцинацирен пăрăнса ан юлăр**

60 çул урлă каçнисем валли сĕнекен пур вакцинăна та йышăнас пулать. Грипп е пневмони чирĕсене пула больницăна лекесси, пурнăçран уйрăлса каясси çын ӳсĕмĕпе тӳрремĕнех çыхăннă.

**3. Юн пусăмне тĕрĕслемелли пирки ан манăр**

Юн пусăмĕ вăл – цифрăсен чи пĕлтерĕшлĕ пуххисенчен пĕри. Ăна лайăх пĕлмелле тата вĕçĕмех тĕрĕслесе тăмалла. Америкăри кардиологи ассоциацийĕ çавна çирĕплетет: юн пусăмĕ 120/80 е унтан пĕчĕкрех пулмалла. Гарвардри медицина шкулĕн даннăйĕсем тăрăх, 55 çул урлă каçнă арçынсен 70 ытла процентĕн юн пусăмĕ нормăран пысăкрах. Юн пусăмĕ пысăк пулни вара вăхăт иртнĕ майĕпе юн тымарĕсен стенкисене хавшатать, çавăнпа та инсульт е чĕре приступĕ пулас, ăс шайĕ чакас хăрушлăх ӳсет.

**4. Упражненисем тăвассине манăça ан кăларăр**

Çулсем кайнă май, пирĕнтен чылайăшĕ тĕрлĕ хускану сахалрах тума тытăнать. Пирĕн ӳт-пĕве вара хускану яланах кирлĕ. Экспертсем çирĕплетнĕ тăрăх, упражненисем вĕçĕм туни мышцăсене çирĕплетет, шăмă масси çухалассине чакарать, астăвăма лайăхлатать, япаласен ылмашăвне йĕркелет тата ыйхăна лайăхлатать. Тепĕр енчен илсен, хусканусем сахал пулни çын самăрлăласси, иккĕмĕш йышши диабетпа чирлесси, инсульт пуласси, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсемпе аптăрасси, ăссăрлăх аталанасси патне илсе пыма пултарать. Америкăри чĕре ассоциацийĕ кашни эрнерех интенсивлă мар майпа 150 минут е интенсивлă майпа 75 минут упражненисем тума сĕнет. Вăтам интенсивлă упражненисен шутне хăвăрт утнине, ташланине е пахчара ĕçленине те кĕртме пулать. Интенсивлă упражненисем – чупни, ишни, çуран уçăлса çӳрени е велосипедпа ярăнни.



**5. Алкоголь ытлашши ĕçме юрамасть**

Нумаях пулмасть ирттернĕ тĕпчевсем мĕн кăтартса панăха? 65 çул урлă каçнă çынсен 10 процентĕ алкоголь напиткĕсене йышăнать. Тепĕр майлă каласан, пĕрре ларсах тăватă е ытларах черккерен кая мар пушатать. Алкоголь нумай ĕçни кирек епле ӳсĕмри çыннăнне те ракпа е чĕре чирĕпе чирлеме пултараслăхне самай ӳстерет. Çын ватăлнă майĕпе ӳт-пĕвĕн çусăр масси сахалланать, шăмă хавшаклануть. 60 çулхи ӳсĕр çын тăрăнса кайни, 40 çулхипе танлаштарсан, самай йывăртарах пулма пултарать. Ватлăх еннелле сулăннисем эмел ытларах йышăнма тытăнаççĕ. Эмел вара эрехпе пĕрле организма пысăк сиен кӳме пултарать. Çавăнпа та, сывлăхлă пулас тетĕр пулсан, эрехе висине пĕлсе ĕçĕр е пачах та ан ĕçĕр. Экспертсем çирĕплетнĕ тăрăх, хĕрарăмсен кунне пĕр черкке алкоголь напиткĕнчен, арçынсен икĕ черккерен ытла ĕçме кирлĕ мар.

Шалти ĕçсен пайĕнче

# Парнепе тата асăрхаттару калаçăвĕпе



Шалти ĕçсен министерстви пуçарăвĕпе кăçал «Вĕренме кайма пулăш» акци пĕр уйăха яхăн тăсăлчĕ – августăн 12 – сентябрĕн 10-мĕшĕсенче иртрĕ. Муркаш район территорийĕнче ăна мĕнле иртернине çак кунсенче пĕтĕмлетрĕç.

